Амăшĕ

Ачасем каникулта,
Çывăраççĕ чăланта.
Амăш кĕрсе тăчĕ те,
Шутламалла вылянă пек,
Тĕке-тĕке вăратрĕ:

— Ăш утиял айĕнчен
Сик тух, Марине,
Эс паян урай çăван,
Тавраллипех тасатан.
Сик, тух, Алюшша,
Эс картиш шăлса каян,
Чăх-чĕпе кĕрпе паран.
Вĕçелиспа Кĕркурие
Вăратмастăп, çывăрччĕр,
Ыран ирпе тăратăп,
Ыран сире кантарăп.
Чей вĕретнĕ, яшка пиçнĕ,
Апат çиме манас мар,
Хушнă ĕçрен тарас мар, —
Лăпкăн хытарса хăварчĕ,
Хăй — ĕçне тухса чуптарчĕ.

*Асамат, С. Амăшĕ / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. - Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 407.*